Кӗнеке хыҫҫӑн кӗнеке



В. ДОЛГОВ

# ТӖЛӖНМЕЛЛЕ ВИНТОВКА

Чӑвашгиз · 1947

*Кӗнеке хыҫҫӑн кӗнеке*

Чув.
2-192а

С (Чув)
К Д 64

В. ДОЛГОВ

# ТӖЛӖНМЕЛЛЕ ВИНТОВКА

ИКӖ ОЧЕРК

ЧӐВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар—1947

## В. А. ДОЛГОВ

Василий Архипович Долгов Чăваш республикинче, Çĕмĕрле районĕнчи Хутар ялĕнче, чухăн хресчен çемьинче 1906 çулта çуралнă. Хăйсен ялĕнчи пуçламĕш шкултан вĕренсе тухнă хыççăн вăл Шупашкарти рабфакра вĕреннĕ. Çав вăхăтрах литература ĕçне хутшăнма пуçланă, унăн чи малтанхи сăввисем „Çамрăк хресчен" хаçатра 1926 çулта пичетленме тытăннă.

Долгов Мускаври Государство Университетĕнчи философипе истори факультетĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн Шупашкарти рабфакăн директорĕ, çав вăхăтрах преподавателĕ пулса ĕçленĕ, историпе вĕрентнĕ. Вăл—1928 çултанпа коммунистсен партин членĕ.

Аслă Отечественнăй вăрçа пуçлансанах, Долгов фронта тухса кайнă. Тăшмана хирĕç кĕрешес ĕçре хастарлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн ăна икĕ орден—Отечественнăй вăрçăн пĕрремĕш тата иккĕмĕш степеньлĕ орденĕсене тата „За боевые заслуги", „За оборону Ленинграда", „За освобождение Праги", „За победу над Германией" медальсем панă.

В. А. Долгов çырнă кĕнекесем: „Хура тар" (Тĕпиздат, Мускав, 1930 çул), „Çурхи калавсем" (Чăвашгосиздат, Шупашкар, 1944 çул).

23141-чув

Национальная библиотека Чувашской Республики

Проверено 05 ОКТ 2017

# ТĚЛĚНМЕЛЛЕ ВИНТОВКА

Пěрре, хěллехи ăшă кун, Волхов фронтěнче чухне, манăн Рушинова çулěпе вăрман витěр каймалла пулчě. Вăрманти çул тăвата еннелле\каякан çěре çитрěм те пěр красноармееца тěлпултăм. Ниçталла кайма пěлмен пирки вăл иртен-çӳренсене кěтсе тăрать-мěн. Эпě унпа танлашрăм, ун çине асăрхаса пăхма тытăнтăм. Лутра кěлеткеллě çын вăл. Пичě сарлака, сăнě тěксěм, тăнлавěсем мăкăрăлса тухса тăраççě. Эпě „ку е тутар, е чăваш", тесе шухăшларăм.

— Командир юлташ,—пуçларě вăл вырăсла, тытăнчăклăрах каласа,- манăн Н-ски полка каймалла. Эсир мана çул кăтартса памăр-ши?

„Ку çын тутар пулě..." шухăшларăм эпě каллех: сăмахсене вăл тутарларах çавăрса калаçать.

— Кăтартса парасса парăп та... анчах эсě кам пултăн-ха?

— Эпě—красноармеец Терентьев.

„Терентьев" тесен, эпě пěр иккěленмесěрех:

— Эсě чăваш пулас?—тесе ыйтрăм малтанлăха вырăсла.

— Чăваш,—пĕлтерчĕ Терентьев, тутарларах пек акцентпа.

Эпир иксĕмĕр те хамăр таван чĕлхепе калаçма тытăнтăмăр. Терентьев, Никифор Антонович, хĕрĕх çулти çын. Вăл пушкăртсем хушшинчи чăваш ялĕнче çуралса ӳснĕ. Унăн чĕлхинче чăвашла, пушкăртла сăмахсем пĕрлешсе кайнă. Çавăнпа та вăл пирĕн пек мар, кăшт урăхларах калаçать.

Эпĕ хам та Н-ски полка каятăп та... çула май, çакăнтан тытăнса, иккĕн пĕрле утрăмăр. Манăн юлташ пулчĕ вăл. Вăрманти çул çинче эпир иксĕмĕрех пултăмăр.

Пирĕн умра хĕллехи яка çул тӳп-тӳррĕн курăнса выртать. Йĕри-тавра чăрăш вăрманĕ. Çил пачах та çук. Хĕл хĕллекен кайăк-кĕшĕксем— кăсăясемпе уйăпсем тата темĕнле ытти кайăксем, турат çинчен турат çине siксе, хăйсен çепĕç чĕлхипе темĕскер чĕвĕлтетеççĕ. Пирĕн сасса илтсен, кăштах хăраççĕ те ĕлĕк ял пулнă вырăна уçланкă урлă пĕрин хыççăн тепри вĕçеççĕ.

Çапла, çул çинче малалла утнă май, красноармеец Терентьев мана хăйĕн пурăнăçĕ çинчен каласа, хăй вăрçа мĕнле килни çинчен пĕлтерчĕ. Юлашкинчен:

— Сире тата тепĕр истори каласа парам-ха,— терĕ вăл, тем çинчен аса илсе.—Ку ĕç 1919-мĕш çулта пулса иртрĕ...

* * *

Никифор Антонович каласа панă „историне“ эпĕ, хамăр землянкăна таврăнсанах, васкаса хут

çине çырса хутăм, асăнмалăх юлтăр, терĕм.

„Çип ăçтан çинçе, çавăнтан татăлать“, тет халăх сăмахĕ. Çинçе çип пекех пулнă Терентьевсен пурăнăçĕ те. Çамрăк Микихвер тăлăха юлнă. Кăшт çитĕнсен вара, шăпах граждан вăрçи вăхăтĕнче, Урал ятлă ялта кĕтÿ пăхма кĕрĕшнĕ.

Пĕррехинче, кĕркунне, сап-сарă илемлĕ кун, Микихверĕн кĕтĕвĕнчи сурăх-такасем курăк çисе тăраннă та вăрман хĕрринче лăпкăн канса выртнă. Микихвер те юман каска çине канма ларнă. Çамрăк ача вут-шанкă пухса хунă, кĕл çинче паранкă пĕçернĕ...

Çак вăхăтра ĕнтĕ кĕтÿçĕ ик юланута курах каять. Сиккипе чуптарса пыраççĕ вĕсем Микихвер патнелле. Иккĕшĕ те çамрăк, маттур йĕкĕтсем. Пĕри пăшалпа, тепри—хĕçпе. Сумкăсем пур хăйсен. Сумкисенче туллиех граната.

— Çамрăк тус!—тет пĕри йăсăрланса вырткан вучах патне çитсенех.—Эсĕ кам пулатăн?

— Эпĕ—кĕтÿçĕ, Анттун чăваш ачи—Микихвер, чухăн çын...

— Ну, эппин эсĕ—пирĕн тус. Анчах эпир камне эсĕ пĕлетĕн-и?—ыйтать хайхискер каллех.

— Пĕлетĕп.

— Ну, кала—камсем?

— Хĕрлисем.

— Мĕнле пĕлтĕн?

— Çăлтăртан палларăм. Пĕлетĕп, эсир хĕрлисемех... Эпĕ те хĕрли...

— Вот што?—кулса тĕлĕнет юланут çинчи йĕкĕт.

— Ну, эппин, шуррисем ăçтине пĕлетĕн-и?

— Пĕлетĕп.

Кун хыççăн икĕ каччă хăйсен урхамахĕсем çинчен ялт сиксе анаççĕ те нумайччен Микихвер-пе лараççĕ, тăвансем пек калаçаççĕ. Шуррисем ăçтине тĕпĕ-йĕрĕпе ыйтса пĕлеççĕ вĕсем. Вĕри кĕл çинче кĕрпекленсе пиçнĕ паранкăпа хăналать вĕсене çамрăк кĕтÿçĕ.

— Пăшална кăтарт-ха!—ыйтать Микихвер пĕринчен.—Çитĕнсен эпĕ сирĕн пата, шуррисене хĕнеме, пыратăп.

— Эсĕ çитĕнсе çитнĕ çĕре шуррисем пулмаççĕ. Эпир вĕсене часах ак тĕп тăватпăр,—ăнлантарать Микихвере хĕрлĕ салтак. Унтан вăл хăйĕн винтовкине кăтартма тытăнать.—Хитре вĕт!—тет хăй.

— Хитре!—тĕлĕнет çамрăк кĕтÿçĕ.

Анттун ывăлĕ вĕсен пăшалне тытсах пăхать, хĕвелпе кушăркаса кайнă аллисемпе шăлса ачашлать ăна. Пăшал кĕпçине хăйĕн çивчĕ куçĕсемпе виççе:

— Çитĕнсе çитсен,—тет вăл,—эпĕ те сирĕн пек тумтир тăхăнатăп, хĕрлĕ салтак пулăп эпĕ те...

Пăшал вулли çинчи картсене курать те уй ачи, пулас салтак, вĕсене уйрăммăн-уйрăммăн шутласа, тĕлĕне-тĕлĕне ыйтать:

— Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă, пиллĕк, улттă, çиччĕ, саккăр, тăххăр. Ку картсене мĕншĕн тунă? Вăл картсем мĕн паллисем?

— Тепĕр белогвардееца вĕлерсен, вунă карт пулать,—ăнлантарать пуринпе те интересленекен ачана пăшал хуçи.



Антун ывӑлӗ вӗсен пӑшалне тытса пӑхать..

— Вунпĕр вĕлерсен вара?
— Вунпĕр карт пулать.
— Апла-тăк ăнлантăм, ăнлантăм... Эпĕ те çавăн пек тăвăп. Шуррисене вĕлерĕп—пăшал вулли çине картсем картăп...

Çаксем вара Микихвере, асăнмалăх тесе, вĕрçĕнĕ шлем парса уйрăлаççĕ. Кĕтӳçĕ шлема çавтери саванса, хĕпĕртесе илет. Ана вĕт ку вăхăтчен никам та çавнашкал парне паман, никам та çын вырăнне хурса хавхалантарман. А халĕ кусем, ăна малтанхи хут çеç курнă пулин те, хĕрлĕ çăлтăрлă паха шлем парса хăвараççĕ. „Лайăх çынсем вĕсем, пăхсах паллă, пирĕн çынсем“—тенĕ шухăшсем вĕçленеççĕ Микихвер пуçĕнче. Çапла, лайăх çынсем вĕсем! Анчах вĕсен вăхăт çук. Çавăнпа та юланутçăсем лашисене çавăраççĕ те каялла, вăрман витĕр, çил евĕр вĕçтереççĕ. Салтаксем хыççăн сарă çулçăсем çеç, лутра шĕшкĕсем çинчен ӳксе, вĕççе юлаççĕ...

Çав икĕ йĕкĕт Чапаев отрядĕнчен килнĕ. Разведчиксем пулнă вĕсем. Разведчик пăшалĕ таптаса, хитре... Пулас салтак Никифор Терентьев унăн номерне те шухăшĕпе ăнкарса юлнă. „Виççĕ, виççĕ, пĕрре, унтан çиччĕ“ шутланă вăл. Çак цифрăсене пĕр çĕре хушнă та, вунтăваттă пулса тăнă. „14-мĕш номерлĕ винтовка“ тесе шутланă Микихвер, анчах винтовкăн чăн-чăн номерне, вăл калама пĕлмен. Пинсем таран шутлама пултарайман вăл, вĕренмен... Анчах çав цифра унăн пуçĕнче, таçта шухăш тĕпĕнче, пытанса юлнă-юлнах...

Юланутçăсем тахçанах вăрман хыçне пытаннă, тахçанах хăйсен юлташĕсем патне çитнĕ, шуррисем çинчен хăйсен командирне йĕркипе каласа панă.

Хăйне панă хаклă парнешĕн кĕтӳçĕ нумайччен савăннă. Çак ăшă кĕрхи кун ăна ытла та телейлĕн туйăннă. Йăваш çил ăшшăн вĕрнĕ. Йывăççен тăррисем те урăхла хумханнă пек, хĕпĕртесе-савăнса хуллен-хуллен юрланă пек туйăннă. Çӳллĕ-çӳллĕ тӳпери чăлт шурă пĕлĕт татăкĕсем калама çук илемлĕн куранна. Пĕрре кăпăкланса шуралса çитĕннĕ вĕсем, тепре çу пек ирĕлсе çавăнтах çухалнă. Ку вăхăтчен çĕтĕк-çатăк тумтирпе çӳренĕ Микихверпе пĕрле çак вырăнти уйхир, вăрман, çырма-çатра, унта юхакан, пухăнса тăракан шыв-шур савăннă, шыв хĕрринче ирĕн-каçăн пăшăлтатса ларакан хăях-хăмăшсем савăннă, çӳллĕ йывăççем çинчен вĕлтĕр-вĕлтĕр вĕçсе ӳкекен ылттăн-кĕмĕл çулçăсем савăннă,—пурте, пурте савăнса хĕпĕртенĕ, пурте хăйсен çеммипе, хăйсен йĕркипе савăннă, çын илтмелле мар сасăпа хуллен-хуллен юрланă, сĕрленĕ... Çавăн пек вăл çут тĕнченĕн вăрттăн шавĕ, çавăн пек унăн пире ачашлакан кăмăлĕ, чĕрене кĕрсе чун хĕлĕхне пырса тивекен çинçерен те çинçе хĕлхемĕ... Эпир ăна хамăр туйăмсемпе сисетпĕр, вăхăтлăха пурне те манатпăр, таврари илемлĕхе паранса, çут тĕнчен йăвашлăхне пула ачашшăн савăнса тĕлĕнетпĕр... Çил вăштăр-вăштăр вĕрет-и, хуллен-хуллен пăшăлтатса илет-и, çемçен вĕçсе çулçă ӳкет-и, хурт-хăмăр сасси, инçетре кайăк юрри илтĕнет-и, —пурте, пурте чуна пырса тивет, савăнтарать.

...Красноармеец Терентьев хӑйӗн ача чухнехи пурӑнӑҫӗ ҫинчен, уйрӑмӑнах кӗтӳ пӑхнӑ ҫӗрте пулнӑ „истори“ ҫинчен мана ӑшшӑн та кӑмӑллӑн каласа пачӗ те хӑйӗн винтовкине хулпуҫҫийӗ ҫинчен вӗҫерчӗ, унтан винтовка номерне кӑтартрӗ.

—3317-мӗш номер. Тӗлӗнмелле винтовка,—терӗ тахҫанхи пек, ача чухнехи пек савӑнса,—унтан пӑртакҫӑ сассине хӑпартрӗ те:—Ку винтовкӑпа ӗлӗк шуррисене аркатнӑ, халӗ вӑл мана пулӑшать, нимӗҫсене шаккатӑп унпала. Вӑт, капитан юлташ, мӗнле пӑшал манӑн алӑра!—терӗ.

—Тӗлӗнмелле винтовка!—ҫирӗплетсе каларӑм эпӗ те, салтакӑн чун-хавалне татах та ҫӗклес тесе.

## 2.

Виҫ-тӑват уйӑхран мана пӗррехинче тутар, чӑваш салтакӗсем хушшинче калаҫу ирттерме хушрӗҫ. Рота командирӗ патне пытӑм та хам мӗншӗн килни ҫинчен пӗлтертӗм.

— Ун пирки мана паҫӑрах штабран каласа пӗлтерчӗҫ. Сире кӗтетӗп. Эпӗ ӗнтӗ тутарсемпе чӑвашсене пухрӑм. Пӗтӗмпе тӑватӑ ҫын,—терӗ те командир, капитан Марченко, ҫав салтаксем патне ҫул кӑтартса ячӗ.

Эпӗ куртӑм, пӗр тарӑн лапамра, пӗчӗк хӑвасем хушшинче лараҫҫӗ вӗсем. Илемлӗ лапам тӑрӑх авкаланса выртакан сукмак ҫине тухрӑм та эпӗ тӳрех салтаксем патне ҫул тытрӑм. Пӗчӗк шӑлан ҫырли аврисене атӑпа пусса аманта-аманта утса салтаксем патне ҫитрӗм.

Тӑватӑ красноармеец пӗр ҫӗре пухӑннӑ та тем

çинчен шăкăлтатса калаçса лараççĕ. Пĕр красноармеецĕ винтовкăпа тăрмашать.

—Чун пек пăшал, тĕлĕнмелле винтовка,—тет вăл, хăйĕн аллинчи винтовкине шăлса ачашласа.

„Тĕлĕнмелле винтовка“ тенине илтсен, эпĕ чăваш салтакне Терентьева, Никифор Антоновича, аса илтĕм. „Вăл кунта мар-ши?“—шухăшларăм хам. Мана курсан, боецсем пурте ура çине хăвăрт тăчĕç те, сылтăм аллисене тăнлав тĕлне тытса, саламларĕç. Эпĕ вĕсене сывлăх сунтăм.

— Ларăр!—терĕм вырăсла. Унтан винтовка тытнă красноармеец патне пырса:—Ну, юлташ, кăтартха тĕлĕнмелле винтовкуна,—ыйтрăм эпĕ унран.

Эпĕ тăван чĕлхепе пуплеме пуçласан, салтаксенчен иккĕшĕ пĕр харăссăн:

— Капитан юлташ, эсир чăваш иккен!—тесе тĕлĕнчĕç.

— Чăваш!—терĕ пĕри. Ку хайхи Терентьев, вăрманти çул çинче хĕлле курнăскер, чăваш салтакĕ пулчĕ. Унăн пичĕ-куçĕ çуллахи хĕвелпе саралса кайнă, куçĕсемпе шăлĕсем çеç шап-шурă курăнаççĕ.

— А эпĕ—чăвашла тутар,—пĕлтерчĕ Терентьевпа юнашар лараканни.—Ятăм-хушаматăм: Ибергенов Юзкей.

Чăвашла тутар хăйĕн юлташĕсем çине пăхрĕ те:

— Кусем пурте тап-таса чăвашсем, манăн çывăх туссем!—тесе паллаштарма тытăнчĕ.—Ку—Терентьев, ку—Прокопьев, а лешĕ—Владимиров. Урал чăвашĕ, Саратов чăвашĕ, чăвашри чăваш...

— Терентьев юлташа эпĕ тахçанах пĕлетĕп,— тесе пурне те алă парса тухрăм,

Паллашнă хыççăн эпĕ хам сăмаха пуçларăм: фронтри лару-тăрусем çинчен, хамăр çĕршыври пурăнăç мĕнле пыни çинчен, тĕрлĕ примерсемпе усă курса, тăван чĕлхепе каласа патăм. Юлашкинчен, Терентьев винтовки çине куçрăм, ăна тем пек ырларăм... Чаплă пăшал! Анчах пирĕн халĕ тата та лайăх, çĕнĕ те вăйлă пăшалсем нумай.

Тӳррипе калас-тăк, эпĕ пĕлместĕп: Терентьев юлташ 1919-мĕш çулта чăнахах та çак хăйĕн аллинчи винтовкăна курнă-ши, е урăххине-ши?.. Анчах Терентьев пĕтĕм чĕререн, чунтан ĕненет. „Çак винтовках“ тет, „урăххи пулма пултараймасть“... тесе ĕнентерет вăл. Анчах та вăл çав винтовка номерне мар, номерти цифрăсен суммине—вунтăватта çеç лайăх астăвать...

Вăт, пăхăр та курăр, юлташсем!

Терентьев, унăн юратнă винтовки çинчен эпĕ каланă хыççăн, сăмах хушмасăр чăтаймарĕ. Вăл тăван чĕлхепе, хушăран пĕрер-икшер сăмах тутарла каласа, чаплă пăшал çинчен сăмах пуçларĕ.

— Çак винтовка пулман пулсан,—терĕ вăл,— эпĕ, иптешсем, тахçанах çĕр айĕнче çĕрсе выртнă пулăттăм. Винтовка—хаяр пăшал, вăл—санăн тусу, тетчĕ пире командир яланах. Вырăс винтовки пек тĕл, çирĕп перекен пăшал тĕнчере урăх çук та, тетчĕ вăл пире. Чăн сăмах ку, эпĕ те çавнах калатăп, иптешсем!



Терентьев сăмах хушмасăр чăтаймарĕ

Терентьев кăшт чарăнчĕ те:

— Эсир, капитан юлташ, март уйăхĕнчи çапăçура пулнă пулĕ?—тесе ыйтрĕ манран.

— Пултăм,—ответлерĕм эпĕ.

— Ну, эппин, эсир ман сăмаха часах ăнланмалла.

Терентьев юлташ хăйĕн винтовки çине пăхса илчĕ. Унтан каллех сăмахне хускатрĕ.

— Иптешсем, ку винтовкăн номерĕ 3317. Эпĕ ăна халĕ кăна мар, тĕлĕкре те, вилсен те манас çук...—терĕ вăл ерипен.

— Ну, сват, мĕншĕнне эсĕ çаплах каламарăнха,—хутшăнчĕ Саратов чăвашĕ Владимиров.

— Чăнах та, кала хăвăртрах,—килĕшрĕ унпала Прокопьев.

— Каласам ара!..—терĕ Ибергенов.

— Ну, Терентьев юлташ, кала,—сĕнтĕм эпĕ те.

* *
*

...Инçе те мар авалхи хула—чаплă Новгород. Ун çумĕнче Кирилл монастырĕ. Хулара та, çав монастырьте те нимĕçсем. Вĕсем кунта 1941-мĕш çулта август уйăхĕнче килнĕ те, мурилесшем, пирĕн çĕре чаваласа, сăвăс пек кĕрсе выртăнаçнă, авалхи монастырь стенисем айне çĕрпӳртсем, дзотсем туса тултарнă.

Çуркунне çак вырăнта пысăк çапăçу пуçланса кайрĕ. Çав хаяр çапăçура Терентьев та пулнă. Йывăр вăхăт килсе тухнă та,—шыв тулса ларнă воронкăра иртен пуçласа каçчен

выртнă вăл. Çурхи çанталăк сулхăнĕ, сивĕ нӳрлĕх унăн кĕлеткине витĕр туртнă, чăтма çук шăннă салтак, анчах ăçта каяс: йĕри-тавра фашистсем, пуçа çĕклесенех—пуля шăхăрать.

Çыран хĕрринче пысăк дзот. Çав дзотран нимĕç пулеметчикĕсем пĕр вĕçĕмсĕр вут сирпĕтеççĕ.

Катаран-катаран каç пулса килсен, тĕнчене тĕттĕм чаршав хупласан, выçă кашкăрсем тухаççĕ вăрçă хирне. Нимĕç салтакĕсем вĕсем—çав выçă кашкăрсем. Вилĕсене ухтараççĕ, аманнисене вĕлереççĕ, чĕррисемпе çапăçаççĕ.

Терентьев çак картинăна курса, сăнаса выртнă. Вут сирпĕтсе ларакан дзотри фрицсем, каç пулса çитсен, çапăçу хирне вăрра тухнă, выçă йĕкехӳресем пек сиккелесе, хăра-хăра унта-кунта вăркăнса çӳренĕ. Мародерсен кĕтĕвĕ йышлансах пынă.

...Шăнса, ĕнтĕркесе кайнă чăваш салтакĕ Терентьев, темиçе кун хушши куç хупман пулин те, сыхă пулнă, винтовкине аллинчен вĕçертмен. Воронкăра никам курмалла мар вырăнаçса ларнă вăл, унăн пăшалĕн пульисем ĕнтĕ тăшман салтакĕсем çине вĕçмелле.

— Вилсен те винтовкăна алăра тытса вилем!— тесе пусăрăнтарнă вăл хăйĕн чунне.

Инçе те мар—Волховец шывĕ. Вырăнĕ-вырăнĕпе çурхи пăр çĕмĕрĕлнĕ, тупă йĕтрисем пырапыра ӳкнипе ванса кайнă. Халĕ тата пăр çине шыв тапса тухнă.

Шăнкăр-шăнкăр шăнкăртатса мар,—васка-

васка юхать çурхи шыв. Сарăлсах, тулсах ыырать вăл, пуян та тулăх çур шывĕ.

Нимĕçсем шыв урлă каçма шут тытнă, хăмасем сĕтĕре-сĕтĕре пынă та пăр татăлса кайнă-çĕре каçă хунă. Терентьев вĕсене курса, асăрхаса выртнă, пăшалĕпе ĕнтĕ тĕлленĕ, унăн шĕвĕр пӳрнийĕ курок патне вырăнаçнă. Вăрăм нимĕç каçă çине кĕнĕ,—Терентьев пăшал персенех, çав фашист шыва персе аннă, унтан тепĕри каçма тытăннă—вăл та кутăн-пуçăн шыва чăмнă, виççĕмĕшĕ те çавах—лешсем хыççăн тайкаланса ӳкнĕ, тăваттăмĕшĕпе пиллĕкмĕшĕ тата та интереснăрах татăлса аннă... Вĕсем ĕнтĕ, аманнăскерсем, пăрлă шывра ишнĕ-ишнĕ, шăмпăлтатнă-шăмпăлтатнă та, юлашкинчен вара, йытă чĕлхи пек чĕлхепе—„Майн готт“ тесе хăрушшăн кăшкăрса, ахлатса, ĕсĕклесе, йĕрсе, Волховец тĕпне анса ларнă...

— Пĕтсен те тăшмансене вĕлерсе пĕтем,—тесе пенĕ ун чухне хăюллă салтак Никифор Терентьев. Çапла пуля хыççăн пуля вĕçтерсе фашистсене шыва чăмтарнă. Унтан вăл хăй сиксе тăнă та, çав шыв урлă тепĕр çĕртен каçса, тăшман пулеметне çырма хĕррине туртса пынă. Монастырьти нимĕçсем ăна курнă, пеме тытăннă. Совет воинĕн аллинчи пăшал—туртса илнĕ нимĕç пулемечĕ—нимĕççене хăйсенех çунтарнă, ăшаланă... Анчах персен-персен патронсем пĕтсе çитнĕ, Терентьев вара тăшман пулеметне шыва пăрахнă.

— Санăн хуçу шывра,—тенĕ вăл хăйĕн ăшĕнче шухăш вĕççĕн,—пулеметсăр вăрçма ăна йывăр пулĕ...

Чěмсěр металл шыва путсан, совет воинěн чěри лăпланнă, анчах çилли лăпланман. Ăна, вутхěмěн çунса, ялкăшса салтак çиллине вăратсах, хускатсах тăракан шухăш малалла чěннě: пěр нимěç пěтет—çěнтерӳ çывăхарать, иккě пěтет—çěнтерӳ татах та çывăх пулать... Фашист чěрě юлсан—вăл ман çěршыва пусмăрлас шухăша пăрахмě. Çавăнпа та нимěç захватчикне вěлер, тěп ту!—тенě çав шухăш.

Çакăн пек шухăш-кăмăлпа тулса çапăçнă пирěн салтак, чăваш Никифор Терентьев.

Тăрсан-тăрсан, инçетри хуласемпе ялсем хыçěнчен, сěм вăрмансем урлă, çурхи кăвак тěтресене ылттăн пайăркисемпе майěпен çутатса, никамшăн та ăшшине хěрхенмен вут хěвел, катмаррăн çěкленсе, саркаланса тухнă.

— Тусăм, чунăм!...—тесе пăхнă паттăр красноармеец хăйěн пăшалě çине. Винтовка номерне ирхи хěвел çуттинче курсан, вăл хăйěн тусне вуникě хутчен тытса чуптунă.

* *
*

... Терентьев хăйěн сăмахне каласа пěтерчě те винтовка вулли çинчи картсене кăтартма тытăнчě.

— Пěрре, иккě...—шутларě вăл.

Çирěм çичче çитрě карт шучě.

— Кашни карт пěр фашист вилěмне пěлтерет. Вунтăваттăшне манчченех картнă. Вěсене çав 1919-мěш çулта мана шлем парса хăварнă развед-



23141-4+В

Национальная библиотека Чувашской Республики

чиксем картнă пулĕ, тетĕп. Вĕсен картне кура эпĕ те картма тытăнтăм... Вунвиçĕ карт касрăм.

Вăрман хĕрринче, землянкăсем хушшинче, шăхличĕ сасси илтĕнсе кайрĕ. Ку шăхличĕ красноармеецсене каçхи вĕренĕве чĕнчĕ-мĕн: калаçура пулнă салтаксем тумланчĕç те, вĕренĕве кайма тесе, ытти юлташĕсемпе пĕрле пĕр вырăна, çӳллĕ чăрăшсем айне, пĕтĕм ротипех пухăнчĕç.

Тĕтреленсе, тĕттĕмленсе фронтри каç çывăхарчĕ. Пĕтĕм çырана пин-пин шăрчăк сырса илчĕ. Вĕсен пĕр çемĕллĕ, пĕр майлă юрри хăлхана йăлăхтарать.

Чăтлăх вăрман витĕр эпĕ хамăр землянкăсем патне таврăнтăм.

— Пурте Терентьев пек çапăçсан—вăрçă миçе куна пырĕ-ши?—ыйтрăм эпĕ çавăн чухне хамран хам.

... Никифор Терентьев пек хастар совет салтакĕсем асăмран халĕ те каймаççĕ. Яланах, иртнĕ кунсем çинчен шухăшласан, эпĕ çав паттăрсене аса илетĕп. Ун чухне вара совет патриочĕсен паха ĕçĕсем каллех ман ума тухса тăраççĕ, каллех—ылттăнăн, кĕмĕлĕн ялкăшса курăнаççĕ, çав паттăр салтаксем малаллах, малаллах утаççĕ.

---

1944-1945.

## ЛĂПКĂ ÇЫН

— Сержант Няма çинчен çакна калас пулать,—терĕ лейтенант Васильев,—вăл ытла та лăпкă çын. Килте чухне вăл шăши те вĕлерсе курман, тет, чăхă е автан пусас пулсан та, кӳршĕсене чĕнеттĕм, тет... Эккей пулать кам!..

Лейтенант кĕсъинчен хаçат татăкĕ кăларса пирус чĕркерĕ, унтан ăна чĕртсе ячĕ те:

— Анчах та эпĕ шанатăп ун çине, вăрçăра тăшмана кун памасть вăл,—тесе вĕçлерĕ хăйĕн сăмахне.

Ку сержанта эпĕ те, вулаканăм, лайăх пĕлетĕп. Чăваш вăл. Пĕрре çеç мар курса калаçрăм эпĕ унпалан. Чăннипех те лăпкă çын иккен сержант Няма. Чăвашсем пурте кунĕ темĕпĕр. Апла калани йăнăш пулĕччĕ: чăвашсем хушшинче те тĕрлĕ çын пур—кунни, хаярри пур, усалли, ырри пур, хыт çын та пур. Хăюллисем вара темĕн чухлех!..

Сержант Няма, хăйсен ялĕнчи çынсем пек каласан: Няма Поликарпĕ,—Тутар республикинче çуралса ӳснĕ çын. Вăл пĕр вăтăр çулта пулĕ.

Лутра, анчах тапчам, вăйпитти арçын вăл. Алли-ури çирĕп, хресчен ĕçĕнче пиçсе хытнă. Килте арăмĕ, ачисем пур, тет. Сăнĕ вара темле кăмăллă, ырă сăн. Куçĕсем питех те çивчĕ. Вĕсем таçтине те кураççĕ. Няма юлташ чăвашла, тутарла, вырăсла лайăх пĕлет, анчах кирек хăш чĕлхепе калаçнă чухне те темшĕн именсе калаçать: хĕр пек вăтанать вăл, вăтаннипе хĕрелсе каять. Çамки çине пăтăр-пăтăр тар пĕрчи персе тухать...

Каллех калам: инçетрине курать вăл хăйĕн хĕсĕкрех куçĕпе, унăн куçĕсем çивчĕ, вĕсене вăл таçта çеçенхирте çивĕчлетнĕ, тейĕн.

— Вон фриц!—терĕ вăл пĕррехинче симĕс хăва çине кăтартса. Эпĕ пăхрăм-пăхрăм,—аран-аран куртăм пытанса ларнă нимĕçе. Ула, симĕс плащпа пĕркеннĕ фашист çыран хĕрринче, хăвасем хушшинче, пирĕн еннелле бинокльпе пăхса тăрать. Тăшманпа пирĕн хушăмăрта тулли те тарăн Волхов васкаса юхать. Унăн таса шывĕ: „часрах, часрах ирсĕр фашист тĕлĕнчен иртсе каяс!“ тет пулĕ. Тĕрлĕ пулăсем чăмпăлт сикеççĕ те шыва май ярăнса каяççĕ. Каçалла сулăннă сар хĕвелĕн сар çутти шыв тĕпне çитет те çухалать.

— Шыва пăхăр-ха, капитан юлташ,—тет Няма халĕ çеç пĕр пулă сиксе илнĕ тĕле кăтартса,—фриц мĕлки хăйĕнчен виçĕ хут вăрăм.. Пысăклатакан тĕкĕр витĕр пăхнă пек...

Симĕс курăксене сирсе пăхатăп та хăрушла чăсланкка нимĕç мĕлкине курах каятăп: майĕпен хумханса юхакан шывра унăн мĕлки çĕлен пек авкаланать.

— Ну халĕ эпĕ прицел лартам,—систерет мана сержант,—эсир хăть нимĕçĕ çине пăхăр, хăть мĕлки çине пăхăр...

Няма хăйĕн пулемечĕ патне майлăн тăсăлса выртрĕ. Часах вара: тăр-р-р-т! турĕ пулемет кĕпçинчен кĕске очередь. Тăрнаккай та курпун фриц, тусан вĕçтерсе, пăлтăр-палтăр йăванса анчĕ, шыв хĕрринех çитсе выртрĕ. Пĕр кĕтӳ шапа нимĕçрен хăраса шыва сикрĕ.

— Маттур перетĕн!—ырларăм эпĕ.

— 21-мĕш фриц ку,—пĕлтерчĕ мана пулеметчик хăйĕн тавăру счечĕ çинчен.

Çак ĕç 1943 çулхине, август уйăхĕнче, пулса иртрĕ. Унтанпа эпĕ Няма юлташа темиçе хут та тĕлпултăм. Кирек ăçта та вăл хăйне типтерлĕ тытать: стройра-и, кану вăхăтĕнче-и, коммунистсен пухăвĕнче те, мунча кĕме кайсан та, марша тухсан та унăн ури-алли, тумĕ, сăнарĕ— совет воин сăнарĕ; çемçе кăмăллă вара, хĕр-пике кăмăлĕ пек...

* * *

1944 çулхи хĕлле, январь уйăхĕнче, Волхов фронтĕнче пысăк çапăçу пуçланса кайрĕ. Оборонăра тăрса тунсăхланнă пирĕн салтаксем, тăшмана аркатса тăкас тесе, малалла ыткăнчĕç.

Шăпах наступлени пуçланнă кун, январĕн 14-мĕшĕнче, тарăн траншейăра эпĕ Няма юлташа тĕлпултăм. Нимех те калаçаймарăмăр: пĕр-пĕри мĕнле пурăнни çинчен ыйтса пĕлтĕмĕр те уйăрăлтăмăр.

— Ну ыран Новгородра тĕлпулăпăр,—терĕм эпĕ сывпуллашса.

—Новгородра!—килĕшрĕ сержант.

Анчах эпĕ те, Няма та Новгородра çийĕнчех пулаймарăмăр. Çак хулашăн 4—5 кун çапăçма тиврĕ. Сержант Няма çапăçура аманнă пирки госпитале тухса кайрĕ.

Ирсĕр тăшмана хирĕç калама çук паттăр çапăçнă вăл. Няма юлташăн, чăваш сержанчĕн, хастар паттăрлăхĕ çинчен кĕскен те пулин, вулаканăм, сана каласа парам.

...„Мысовая“ ятлă высотана нимĕçсем икĕ çул хушши тытса тăчĕç, шăтăкласа, чакаласа пĕтерчĕç. Темиçе йĕрке траншея, чултан тунă дзотсем, окопсем, стрелок ячейкисем, мина лартса тухнă вырăнсем, темиçешер ретĕн карнă йĕплĕ пралуксем, такăнтаракан пралук çыххисем,—çакăн пек пулнă нимĕçсен оборони. Кăнтăрла вилĕ вырăн пек туйăннă „Мысовая“ каçпа, тĕттĕмленсен, чĕрĕлнĕ, пуля пĕрхĕтсе тăнă. Ракета хыççăн ракета вĕçтернĕ унти гитлеровецсем...

Тăшман туса тултарнă укрепленисене çĕмĕрмелле, „Мысовая“ высотана çавăрса илмелле пулнă майор Кальсинăн батальонĕн. Çак высотана илмесĕр, унтан вара Хутынь ялне çавăрса илмесĕр Новгород патне пыма май пулман. Тăшман оборонине вакласа, аркатса, каса-каса тăкса çеç вата хула патне пыма пулнă.

Вуншар та çĕршер тупă, миномет пĕр сехет çурă вĕçĕмсĕр, аслати евĕр хаяррăн, çĕр çĕмĕрсе



**Вӗсем вӗрилексе, хӗрсе ҫитмӗ пулемёта цӗчӗк хӑва хушшинче хӑвӑрт туртса пынӑ**

кĕрлесе тăнă хыççăн атакăна çĕкленнĕ пирĕн боецсем. Шăпах çак вăхăтра нимĕçсен виçĕ пулемечĕ чарăнми шатăртаттарса пеме тытăннă. Вĕсемпе пĕрлех тата темле майпа малти ретре тытăнса юлнă „колдун" пеме пуçланă („колдун" тесе пирĕн боецсем нимĕçсен 37 миллиметрлă калиберлă туппине калатчĕç).

Пулеметчиксем Нямăпа Зеленов, иккĕн, тарăн юр çийĕн малалла ашса кайса, вырăнтан вырăна куçса çӳресе, нимĕç пулеметчикĕсене хирĕç пуля сирпĕтнĕ. Пулеметчиксен дуэлĕ çĕршер, пиншер патрон çăтнă. „Максим" лента хыççăн лента пушатнă.

— Акă сире куччене́ç!—кăшкăрнă пĕр пулеметчикĕ хаяррăн.

— Так и надо фрицам!—савăнса каланă тепри.

Тăшманăн пĕр пулемечĕ ĕнтĕ чыхăнса ларнă.

— Халĕ тепĕрне, тепĕрне!..—тесе чупнă икĕ харсăр пулеметчик хăйсен юлташĕсемпе. Вĕсем вĕриленсе, хĕрсе çитнĕ пулемета пĕчĕк хăва хушшине хăвăрт туртса пынă. Пĕр самантра ăна çĕнĕ вырăна вырăнаçтарса лартнă. Кăштах вăхăт иртсен вара тăшманăн тата тепĕр пулемечĕ путланнă.

— Аван!—хĕпĕртесе савăннă пулеметчик Поликарп.

— Что?—ыйтнă вырăс Зеленов чăваш сăмахне ăнланмасăр.

— Якши, тетĕп! Якши!—ответлет Няма, хĕрсе кайнăран тутарпа чăваш чĕлхине кăштах пăтраштарса.

— Что?...—каллех ăнланман вырăс.

— Аван, якши, хорошо!.. тетĕп...

— Точно!

Тăшманăн виççĕмĕш пулемечĕ патне пехотинецсем вăрттăн упаленсе пынă та гранатăсем пăрахса ăна нимĕçĕ-мĕнĕпех аркатса тăкнă. Чĕррĕн тытăнса юлнă фашистсем ун-кун пăхкаласа тарма тытăннă. Виçĕ пулемет патĕнче фашистсем, юн хăсса, урлă-пирлĕ тăсăлса выртнă.

— Йытта—йытă вилĕмĕ, тăшмана—тăшман вилĕмĕ,—тесе утнă малалла совет воинĕсем—патриотсем.

* *
*

Хутынь—пысăк ял мар. Анчах унта çапах та, кетмер çуртсем пур. „Мысовая“ высота çинчен чĕррĕн тарма ĕлкĕрнĕ нимĕçсем, майор Кальсинăн батальонĕ хĕссе пынипе, Хутынь ялĕ патнелле тарса, унти чул çуртсене кĕрсе ларнă. Каллех хирĕç тăма тытăннă вĕсем. Пĕр чулçуртран тăшман пулемечĕ вĕçĕмсĕр персе тăнă. Çав пулемета пĕтермесен, нихăш енчен те пырса кĕме çук Хутынь ялне.

— Çак кунсене эпĕ хальхи пекех астăватăп,—терĕ лейтенант Васильев ăна тепре курсан.

Васильев калани тăрăх манăн куç умне çавăн чухнехи çапăçу картинĕ уççăн тухса тăчĕ.

...Пирĕн салтаксем юр ăшĕнче выртаççĕ. Вĕсен хастар ретĕнче—паттăр пулеметчик Няма. Тимлĕн сăнаса пăхать вăл тăшман пулеметчикĕ персе ларакан çурт еннелле. Çав чул çуртра ни-

мĕçсем темиçе амбразура тунă. Халĕ кашни амбразурăран пуля сирпĕнсе тăрать. Анчах пĕр харăс сирпĕнмест: хăш енчен пыма тытăнатăн— çав енчен перет нимĕç пулемечĕ.

— Ку çуртра ик-виç пулемет пулас,—шухăшлать сержант. Унтан вăл каллех хăйне-хăй калать:—Тăшман пулеметчикĕсене пĕтерсен, пулеметсем хăйсем тĕллĕн переймĕç...

Çакăн хыççăн пирĕн пулеметчик хăйĕн „максимне“ лайăхрах вырăнаçтарса лартать те:

— Ну, Зеленов юлташ, фашистсене ăшалар!— тет çирĕп сасăпа.

— Елки-палки!—тесе сурать те Зеленов, хăйĕн тусĕпе килĕшсе, тăшман çине пуля хыççăн пуля ăсатма тытăнать.

Совет пульлисем шăхăра-шăхăра ыткăнаççĕ, тĕттĕм амбразурăна вĕçсе кĕреççĕ. Ак чул çуртра çĕлен-калтасем çухрашма, йынăшма тытăнчĕç. Тăшман пулемечĕ, çапах та, чарăнмарĕ: хытăран та хытăрах пеме пуçларĕ. Нямăна тепĕр пулеметчик, ефрейтор Стремеухов, Украина çынни, пулăшрĕ. Сулахай флангра вĕçĕмсĕр такăртаттарса юрлаттарчĕ вăл хăйĕн пулеметне. Çав вăхăтрах хыçран, вĕтĕ-вĕтĕ çирĕксем хушшинче, „колдун“ кĕрĕслеттерме тытăнчĕ. Паттăрсем часах ăнланчĕç. „Колдуна“ хамăр артиллеристсем çавăрса илнĕ-мĕн, ăна вĕсем йĕркеленĕ те тăшман еннелле пеме çавăрса лартнă. Чăнах та маттур переççĕ иккен совет арттилерисчĕсем!

Тарăн юр çийĕн, чупнă çĕрте чупса, утнă çĕрте утса, упаленсе кайнă пулеметчик Няма.

Ун хыççăн сивĕ юр вĕçсе, тĕтĕм пек йăсăрланса çеç юлчĕ...

Кăштах вăхăт иртсен урам тăрăх, чул çуртран,—пирĕн еннелле мар,—нимĕçсем еннелле пульăсем шăхăрма тытăнчĕç. Траншейăсенчи фрицсем пуçĕсене çĕклеймеççĕ.

— Хамăр пулемет!—кăшкăрчĕ совет воинĕ савăнса.

— „Максим“! Хамăрăн!—хутшăнчĕ иккĕмĕшĕ.

— Сассинченех паллă!..—çирĕплетрĕ виççĕмĕшĕ.

Чул çурта кĕрсе вырăнаçнă сержант хăйĕн пулеметне çирĕплетсе лартнă. Унăн халĕ темиçе пулемет. Анчах чи лайăххи—„максим“.

Тарăхса çитнĕ чăваш ĕнтĕ вилĕ нимĕçсен ирсĕр кĕлеткисене чӳрече витĕр урамалла ывтать.

— Çав кирлĕ вĕсене! Çав кирлĕ!..—катаран кăшкăрать Няма тусĕ, пулеметчик Стремеухов. Хăй, лачкам шыва ӳкнĕскер, монастырь енне тĕллесе перет. Унта нимĕçсем кĕпĕрленсе пыраççĕ-мĕн. Няма та вĕсене ăшалама тытăнать. Совет пульлисем пырса вăрăннипе нимĕç хыççăн нимĕç персе анать, кĕлте пек тăкăнать.

Икĕ фашист чул çурт еннелле гранатăсем йăтса чупаççĕ. Çав вăхăтрах иккĕшĕ те кутăнпуçăн çаврăнса ӳкеççĕ.

— Манăн пулсан икĕ фриц мар, вĕсен икĕ роти те нипочем... Эпĕ вĕт пулеметчик!.—шухăшлать харсăр сержант. Ку пӳлĕмре вăл хăй хуçа. Анчах юнашар пӳлĕмре, ытти юнашар çуртсенче, Хутынь ялĕнче, монастырьте тăшман

пуçпулса тăрать-ха. Тăшмана çапса аркатмалла, тĕп тумалла.

—Русс, ставайсь!—илтĕнет кӳршĕ пӳлĕмрен çĕтĕк сасă.

— Сана, çĕрçăтмана, ак сдавайся тетерем эпĕ. Эпĕ—вырăс шăлнĕ çеç, эпĕ—чăваш,—тет те пулеметчик гашетка çине пӳрнепе пусать. Унтан каллех:—Эпĕ—чăваш. Русс килтĕр-ха, вăл килсен, эсĕ, хура юн, эсрел, шăммуна та çĕклеймĕн...—тесе очередь хыççăн очередь ярать... Пысăк пӳлĕмĕн сулахайри стени, хулăм чус хăмаран тунăскер, ала пек шăтăкланса каять.

— Тăшман, пĕл!.. Эпĕ—чăваш çынни. Чăваш ачи санăн пуçна çапса лапчăтать, тытса пыршупакартуна кумать...

Фашистсем, кашкăрла ӳлесе, вилес йытăлла нăйкăшса, пĕр кĕтессе пухăнаççĕ.

— Поликарп, эпĕ кунта!..—тет чӳрече умĕнче Стремеухов.

— Эпĕ те...—кăшкăрать Зеленов.

Унччен те пулмарĕ нимĕç çĕлен йăвине иквиç граната чӳрече витĕр вĕçет. Ахлатса, çĕр тĕпретсе çурăлса кайрĕç тăшман пуçĕ çине ӳкнĕ гранатăсем.

* *
*

Мĕн тĕттĕм пуличченех ял патне пĕр нимĕç те пырайман. Çавăн пекех тата вĕсем ялран та тухайман. Пулеметчиксем вĕçĕмсĕр кастарса тăнă фашистсене,— пуç çĕклеме паман, чыхăнтарнă...

Инçетре-инçетре хĕвел анса ларнă хыççăн,

Волхов вӑрманӗ сивӗ тӗтре ӑшне путсан, Кальсин боецӗсем Хутынь ялне утса мар, упаленсе, хырӑмпа шуса кӗчӗҫ,—вӑхӑт ҫитсен вара сиксе тӑчӗҫ те фашистсем ҫине арӑслансем пек пырса тапӑнчӗҫ.

Пулеметчиксем Няма, Зеленов, Стремеухов кӗтсе илнӗ вӗсене. Ҫак хаяр ҫапӑҫура ӗнтӗ Няма аманнӑ. Тӑшман пульли кӑкӑртан кӗрсе хулпуҫҫирен тухнӑ. Анчах та командир лартнӑ задача татса памасӑр вырӑнтан кайман паттӑр пулеметчик Няма.

Мӗнле тӳснӗ-ши вӑл ҫавтери пысӑк сурана?

---

... Волхов ҫыранӗсенчен 150—200 километр малалла кайсан, сивӗ хӗл иртсе ҫур килсен, май уйӑхӗнче, пӗр ырӑ, хӗвеллӗ, ӑшӑ кун, лейтенант Васильева эпӗ тата тепӗр хут тӗлпултӑм. Тӳрех „лӑпкӑ ҫын“ ҫинчен ыйтса пӗлме тытӑнтӑм эпӗ.

— Халӗ вӑл госпитальре,—терӗ Васильев юлташ. Унтан вӑл тӗлӗне-тӗлӗне каларӗ:—Вӑт йӑваш, лӑпкӑ ҫын те, эсӗ ӑна. Тӗлӗнмелле ҫапӑҫрӗ чӑваш ҫынни, сержант Поликарп Няма. Хӑй аманнӑ. Ҫапах та хамӑр подразделени яла пырса кӗричченех ҫапӑҫрӗ вӑл. Медсанбата ҫуранах кайрӗ, лав ҫине те лармарӗ. Эпӗ утма пултаратӑп, манӑн урасем ҫирӗп. Малалла каяс пулсан, эпӗ Берлина ҫитме те пултаратӑп, терӗ Няма.

Лейтенант хӑйӗн боецӗсем ҫине ӑшшӑн пӑхса илчӗ те:

— Ҫынӑн паттӑрлӑхӗ хӑш чухне сӑнран па-

чах та курăнмасть. Совет çыннин тăшманшăн йăваш кăмăл çук!—терĕ юлашкинчен.

Эпĕ лейтенант сăмахĕпе килĕшрĕм: чăваш сержанчĕ çавăн пек пысăк хаярлăхпа çапăçнăшăн эпĕ пĕтĕм чунăмпа хĕпĕртерĕм.

Чăнах та, мĕнтери савăк хамăр çынсен паттăр ĕçĕ çинчен илтме. Ывăлĕ ырă ĕç тусан, паттăра тухсан, унăн ашшĕ-амăшĕ хĕпĕртет. Пурте çавах: савнă каччăшăн савнă хĕрĕ хĕпĕртет, ашшĕшĕн ачи-пăчи хĕпĕртет. Паттăрсемшĕн халăх хĕпĕртет.

Çĕнтерӳшĕн хĕпĕртет пирĕн халăх! Мĕншĕн тесен çĕнтерӳрен пысăкраххи, пахараххи, савăкраххи тĕнчере урăх нимĕн те çук.

Çапла мар-и?

---

1948 г.
Акт № 467.
Вкладн. л.

Инв. № 3011.

Редактор **Я. Ухсай.** Техредактор **И. Григорьев.**
Художник **П. Сизов**

НТ 00926 Подписано к печати 1—IX—1947 г. Об'ем **2,0**
Заказ № 272. Тираж 5.000 экз.

Отпечатано в Цивильской типографии Упр. полиграфпромышлен·
при Совете Министров Чувашской АССР.

48-553-5/14

Цена 1 руб. 50 коп.
Хакӗ 1 тен. 50 пус.

11621
Чу
2-1

Ч

В. ДОЛГОВ

**ЧУДЕСНАЯ ВИНТОВКА**

На чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ

Чебоксары * 1947